23-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1942
ИЮНЬ
2
ЫТЛАРИКУН
126(6061) №

# Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлеш ěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

## *Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишěн Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!*

### Новосибирск облаçěнчи Чистоозернăй районěнчи „Путь крестьянина" ялхуçалăх артелěн колхозникěсемпе колхозницисем Пěтěм Союзри колхозниксемпе колхозницăсене чěнсе калани

Хаклă юлташсем — колхозниксемпе колхозницăсем!

Пирěн пěтěм халăх, пěр çын пек пулса, гитлерла ирсěрсене хирěç çěкленчě. Кирек хăш заводра та, кирек хăш шахтăра та, пур çěрте пěр шухăш, пěр ěмěт — нимěçсен фашистла тискер йытăсене çěнтересси, вěсене пирěн совет çěрне хапсăнма пăрахтарасси, вěсене пěтěмпе пěтерсе тăкасси, пěтěм вăйпа çěмěресси.

Çулпуçěн, пирěн Сталин юлташăн приказěнче калани — пирěн колхозниксен шухăш кăмăлě.

Нимěçсен помещикěсем, князěсем, баронсем тата вěсен хÿрешкисем совет халăхěн юнне нумай тăкрěç. Нимěçсен алăпсăр ачасене сахал пěтерчěç-и вěсем, пирěн хěрсене сахал çынна намăслантарчěç-и вěсем, сахал старике вăйпа кăл кăтартса асаплантарса пěтерчěç-и вěсем?

Пирěн колхозниксен сăмахě пěрре те пулиншěн те паллă: нимěç кашкăрěсене совет çěрě тăрăх каскăнланса çÿреме çитě! Тăшмана аркатса тăкмасăр пирěн пěтěм çěршыв çěкленсе тăчě. Рабочисем станоксем патěнче, домнăсем патěнче, мартенсем патěнче, рудниксенче кунěн-çěрěн, куç хупмасăр ěçлеççě. Эпир вара, колхозлă хресченсем, кая юлăпăр-и, пěтěм халăх ěçěшěн, хамăр телейшěн, хамăр ачасемпěн хамăрăн вăя шеллěпěр-и?! Çук, шеллемěпěр!

Колхозник юлташсем! Продовольстви-пе ялхуçалăх чěртаварě фронта хěçпăшалсемпе боеприпассем пекех кирлě. Пирěн хаклă Хěрлě Çара лайăх тăрантарас пулать, тумлантарас пулать, тăхăнтарас пулать, мěн кирлине пурне те парса тăрас пулать. Çăкăрпа какай — вěсем пире хÿтěлекенěн, пирěн боецăн [illegible]

[illegible]

Пирěн колхозницăсем питě тăрăшса тата пěлсе ěçлеççě. Вăрçă кунěсенче хěрарăмсем колхозра уйрăмах паха, ěçе татса паракан вăй пулса тăчěç. Вěсем тăван çěршыва алла пăшал тытса хÿтěлеме фронта кайнă арçынсем вырăнне тăчěç. Нимěçсен фашистла ирсěрěсене часрах пěтерсе тăкас тата вěсене ача амăшěсен куççулěсемшěн часрах тавăрас тесе, пирěн колхозри хěрарăмсем темле йывăрлăха та тÿссе ирттерме хатěр. Пирěн колхозницăсем нумайěшě заданисене, нормăсене кулленех ирттерсе тултараççě, ырми-канми ěçлеççě. Пирěн ача яслийě усăлать, хирте пěрле апат çиес ěçе организациленě, бригадăсем валли лайăх, культурăллă стансем туса хунă.

Пирěн колхоз пěрчěллě тырăсене кěске срокра акса пěтерчě. Оборона фондне хывма тата нимěç оккупанчěсенчен асап курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма эпир планран ирттерсе 40 гектар тěштырă акса хăвартăмăр. Халě эпир çитес кунсенче çěрулмипе пахча-çимěçсем лартса пěтерме пěтěм вăйран тăрăшатпăр. Хирте кунсерен хăвăртрах та лайăхрах ěçлесе пыратпăр, пур колхозниксем те тракторпа, лашапа вăйěпе тата алăпа ěçлемелли ěçсенче нормăсене ирттерсе пултарччăр тесе тăрăшатпăр.

Пысăк тухăçлă тырпула, вăрçă тухнахи тырпула лайăх хуçа пек тăрăшмасăр, юратса пăхмасăр тата çěре удобрени хывмасăр туса илме çук. Халăх сăмахě çапла калать: «Тислěкне йышлărax тăк — кěлетÿ пушă тăмě». Çуркунне эпир хире тислěк тата вырăнти ытти удобренисем тăкрăмăр. Усентăрансене апатлантармашкăн эпир вырăнти удобренисем кирлě таран хатěрлерěмěр.

Кěрхи тырăсене пирěн сÿреленě тата çумкурăксенчен тасатнă. Çум çумлама, ретсем хушшинче ěçлеме тата ÿсентăрансене тăрантарма пирěн пур колхозниксем те — ватти-вěтти таранах тухěç. Пирěн Çěпěрти хирсем кăçал çумкурăксенчен таса пулччăр, çакна эпир тăватпăрах.

Тырă пăхса çитěнтересси вăл ěçěн çурри кăна пулса тăрать-ха. Тепěр ěç, чи кирлě ěç вăл — тырра хăвăрт, пěр тăкаламасăр пухса кěртесси пулать. Сталин юлташ лайăх хуçа пек çапла каларě: «Тырă пухса кěртесси вăл—пěр сезонра тумалли ěç, вăл кětсе тăма юратмасть. Вăхăтěнче пухса кěртрěн — туянтăн, кая юлса пухса кěртрěн — çухатрăн». Çак сăмахсене эпир асра тытатпăр. Пирěн туянмалла, çěнтермелле. Эпир çапла тăватпăрах: тěштырăсене эпир 16 ěç кунěнче пухса кěртме шутласа хутăмăр.

Тырă пухса кěртес ěçри çěнтерěве эпир организацилеме тытăнтăмăр ěнтě, хăй тěллěн пулмасть вěт вăл, колхозник юлташсем! Пирěн артельре косилкăсене, жнейкăсене, молотилкăсене, сортировкăсене юсас ěç халь хěрÿллě [illegible]

[illegible]

ăнăçлăн тата вăхăтра туса пěтерес пулать, çапла тума тăрăшаççě ěнтě пур колхозниксем те. Эпир çапла йěркелетпěр: тырра вырса пухса кěртнě вăхăтра васкаса, лайăх вăхăтра кěрхи тырăсене акса хăваратпăр. Пěлтěр пирěн çавăн пек тырăсене ěлěкхинчен ытларах акрěç. Кăçалхи кěркунне эпир вěсене тата ытларах акăпăр.

Хаклă юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем! Хěрлě Çара апат-çимěç, промышленноçа — чěртавар парса тăрас тěлěшпе эпир хамăрăн тăван çěршыв умěнче ответлă пулса тăнине ăнланса, эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илес, государство умěнчи обязательствăна срокчен тултарас тата 1942 çулти ялхуçалăх ěçěсен государство планне лайăхрах пурнăçлас тěлěшпе колхозсен, районсен, облаçсен, крайсен тата республикăсен Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăвне пуçласа яма сěнетпěр.

Ăмăртура мала тухнă колхозсем тесе эпир çакăн пек колхозсене шутлама сěнетпěр: хăш колхозсем çуртыррисем акмалли государство планне тата тěштырăсен, техникăллă культурăсен, çěрулмин тата пахча-çимěçсен тухăçлăхěсен планне ирттерсе тултарăççě, государствăна ялхуçалăх продукчěсем тăратас тěлěшпе илнě обязательствăсене срокчен тултарăççě, выльăх-чěрлěх ěрчетмелли плана тата кашни выльăх валли апат пухса хума кăтартса панă заданисене [illegible]

[illegible]

бригадăсенче те илеç тесе шанса таратпăр.

Эпир СССР Оборонин Государственный Комитетне социализмлă ăмăртура мала тухакан облаçсемпе крайсене тата республикăсене пама Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне тума ыйтатпăр.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем!

Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишěн пыракан Пěтěм Союзри социализмла ăмăртăва тухăр!

Пирěн хěрлě воинсем фашистла тискер кайăксене хирěç мěнле кěрешеççě, хирте те çавăн пек ěçлěпěр. Колхоз уйхирěсенче халиччен пулман пек пысăк тухăçлă тырпул туса илер.

Уйхирсемпе фермăсенче тÿрě кăмăлпа, вăй-хала шеллемесěр ěçлесе, гитлерла Германие аркатса тăкма Хěрлě Çара пулăшар.

Колхозлă хресченсем, ялхуçалăхěнчи социализмлă ăмăртăва тухăр!

Аслă Ленинăн ялавě айěнче, пирěн тус тата çулпуç, пирěн аслă Сталин ертсе пынипе — малалла, çěнтерÿ патне!

**Çак чěнěве «Путь крестьянина» колхозăн пухăвěнче пěрсаслăн йышăннă; пуху хушнипе çаксем алă пуснă: П. Лубяный**—колхоз председателě, **Ф. Алешин**—пěрремěш бригадăн бригадирě, **С. Анистратенко** — иккěмěш бригадăн бригадирě, **Г. Паращук** — виççěмěш бригадăн бригадирě, **С. Евсиков** — трактор бригадин бригадирě, **И. Многолетний** — комбайнер, **Т. Винтюляк**—доярка, **С. Ашека** — колхозник, **М. Каминский** — колхозник, **П. Скакун** — конюх, **Я. Колотеев** — сеялщик, **М. Лубяная** — звеньевой, **Ф. Винтюляк** — колхозник, **А. Марга** — счетовод, **В. Каминская** — кайăк-кěшěк фермин заведующийě.

## Выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!

*Казах ССР-ěнчи Алма-Ата облаçěнчи Кугалински районри Сталин ячěпе тăракан ялхуçалăх артелěн колхозникěсем колхозла выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри мěнпур работниксене чěнсе калани*

**Хаклă юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем — чабансем, дояркăсем, телятницăсем, свинаркăсем, конюхсем, скотниксем!**

Эпир пурте 1942 çулта фашистла çынçиенсене çěмěрсе тăкас кăмăлпа пурăнатпăр. Пурте çавăн çинчен шухăшлатпăр, пурте калаçатпăр.

Фашистла захватчиксене çěнтерессиe пиртен те килет. Хěрлě Çара лайăх [illegible]

Пирěн колхозăн выльăх-чěрлěх нумай. Фермăсенче майракаллă шултăра выльăхсем 1.081 пуç, качакасемпе сурăхсем 6.475 пуç, 398 сысна, 392 лаша шутланать. Иртнě çулта выльăх-чěрлěх хисепне ÿстерес тěлěшпе плана пур выльăхсем енěпе те тултарнă.

Пирěн фермăсенче ěçлекен колхозниксем сěт суса илес тата çăм касса илес плансене ытлашшипех тултарчěç. Иртнě çулта хамăрăн ěнесенчен пирěн вăтамран 1.600-шер литр сěт суса илмелле пулнă, эпир вара 1.880-шер литр суса илтěмěр. Кашни сурăхран планпа пăхнă 3 килограмм вырăнне 3,8 килограмм çăм касса илтěмěр. Обществăллă выльăх-чěрлěх пирěн колхоза 1.206.000 тенкě тупăш пачě.

Кăçалхи çулăн пěррěмěш кварталěнче государствăна 24 пин литр сěт патăмăр, çапла вара квартал планне 190 процент тултартăмăр. Выльăх кěтмелли çарансенче пирěн 2.000 сурăх тата майракаллă шултăра выльăхсем 500 пуç çÿреççě. Выльăхсем чирлени тата вилни пулман. Выльăхсене çарансенче кěтсе çÿрени халех ěнтě 1.000 центнер ытла утă перекетлесе хăварма май пачě.

Пирěн колхозра çак кунсенче выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри стахановецсем нумайăн ÿссе çитěнчěç. Эпир чабан Абдукалык Сарсенов пек çынсемпе мухтанатпăр, вăл кашни сурăхран план тăрăх 3,6 килограмм çăм илес вырăнне 4,77 килограмм касса илнě; Ульяна Сероштан, Екатерина Подвигина, Вера Машкина, Анастасия Пономарева пек дояркăсемпе мухтанатпăр, вěсем сěт суса илес задание ирттерсе тултарнă тата пăрусене пурне те сыхласа хăварнă. Эпир çамрăк выльăхсене тăрăшса пăхса усратпăр. Кăçал пирěн колхоз ферминче 159 пăру çуралчě, вěсем пурте сывă пурăнаççě. 2.354 путек çуралчě, вěсенчен 9 путек çеç вилчě, çакă вăл çур процентран та сахалрах. Пирěн тихасем пěри те вилмен. Кăçал çуралнă 50 тихана пурне те сыхласа хăвартăмăр.

Государство умěнчи обязательствăсене пурне те эпир срокчен тултартăмăр. Эпир çур çулталăкра аш-какай памалли плана тултарнă та ěнтě. Оборона фондне, Хěрлě Çар валли парнелесе, эпир иртнě çулта 6.000 пăт тулă, 660 пăт аш-какай, 10.000 литр сěт, 300 килограмм çăм, 50.000 тенкě укçа хыврăмăр. Хěрлě Çар валли 160 лаша патăмăр.

Выльăх-чěрлěхсен хисепне малалла хăвăрт ÿстерсе пыма тата вěсен продуктивноçне хăпартма, выльăх-чěрлěх продукчěсем туса кăларассине ÿстерме кашни колхозрах сахал мар майсем пур. Эпир фронт валли, тăван çěршыв валли татах та нумайрах сěт, çу, аш-какай, сало, пыл, çăм, çăмарта, тир-сăран пама, Хěрлě кавалери валли çирěп те шухă лашасем татах та ытларах пама пултаратпăр тата памалла та. Çак шутпа эпир выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме сěнетпěр.

«Хуçи лайăх пулсан, вăкăрě те мăнтăрланать», теççě старикем. Ку вăл шăпах çавăн пек. Сěт нумайрах туса илесси, выльăхсен йывăрăшě хушăнса [illegible] тесе тăрăшни, — çаксем вěсем выльăх-чěрлěхсен продуктивноçне хăвăрт тата нумай ÿстерме май параççě.

Ěне сěчě унăн чěлхи çинче — çак чăнлăха выльăх-чěрлěх ěрчетекенсем пурте лайăх пěлеççě. Выльăх апачěшěн эпир халě тăрăшатпăр. Çурхи ака ěçне 9 кунра вěçлерěмěр, плана 106,8 процент тултартăмăр. 2.050 гектар тěштырă культурисем тата 159 гектар выльăх апачě тумалли культурăсем акрăмăр. Оборона фондне хывма тата нимěç оккупанчěсенчен инкек курнă колхозсемпе колхозниксене пулăшма планран ирттерсе эпир 25 гектар тěштырă культурисем акса хăвартăмăр. Утă пухса кěртмелли инвентарьсене хатěрлесе çитертěмěр.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем! Массăллăн утă çулмалли тата силос хывмалли вăхăт çывхарса килет. Выльăх апачě хатěрлес ěçе фронтри пек, вăрçăри пек организацилесе ирттерер, кашни выльăх валли апат хатěрлеме правительство палăртса панă нормăсене тултарар тата ытлашшипех тултарар. Выльăх апачě тумалли культурăсене акас плана тата пысăк тухăçлăх илес плана пур колхозсенче те тултармалла тата ытлашшипех тултармалла тăвар. Хирте кайсем тěллěн ир ÿсекен курăксене пухса силос хывмалли çулталăкри задание пěтěмпех тултарар. Хамăрăн улăхсемпе выльăх çÿретмелли çарансене лайăхлатар, выльăхсене кěтÿ кěтсе çÿрессине пур çěрте те пурнăçа кěртер, выльăхсене кěтÿ кěтес ěçе лайăх организацилер!

Тасалăхра тытни, час-часах асăрхаса тăни — выльăха апат пекех кирлě. Хамăрăн пур фермăсенче те, выльăхсен пур витесенче те, пур свинарниксенче те, сурăхсемпе качакасене, лашасене, чăх-чěпсене усрамалли пур витесенче те йěркелěх туса хурар!

Выльăхсене чуптарас кампанине организованно ирттерер, ăратлă аçа выльăхсемпе туллинрех усă курар, ěнесемпе сурăхсене, сыснасене, кěсресене хěсěр юлма парар мар, кашни ама выльăхран çамрăк выльăх илме тăрăшар.

Фермăсенче пуринче те ěнесене сăвас тата выльăхсене самăртас ěçе организацилер. Сěт суса илес тата выльăхсен йывăрăшне хутшăнтарса пырас тěлěшпе уйăхри тата кашни талăкри плана тултарасси — кашни фермăшăн, кашни дояркăшăн, телятницăшăн, свинаркăшăн закон пулса тăрать. Кашни уйăхрах, кашни кунах сěт сăвассине тата выльăхсен йывăрăшне хутшăнтарассине ÿстерсе пымалла, — эпир çакна тума пултаратпăр тата тума тивěç те!

Государствăна выльăх-чěрлěх продукчěсем памалли обязательствăсене срокра тултарар, хамăрăн государствăна нумай сулла сěт, лайăх самăртнă выльăх-чěрлěх, таса çăм, пысăк пахалăхлă тир-сăран парар.

Оборона Халăх Комиссарěн Сталин юлташăн приказěпе хавхаланса, эпир çакăн пек обязательствăсем илетпěр:

1. Государствăна тěштырă, технически культурăсем, выльăх-чěрлěхěн тěрлě продукцине памалли обязательствăсене [illegible] ниинчен 25 проц. ытларах çăм илмелле.

3. Кашни ěнерен вăтам шутпа 2.000 литртан кая мар сěт суса илмелле.

4. Выльăх-чěрлěхсен хисепне ÿстерме государство панă плана майракаллă шултăра выльăхсем енěпе 40 пуç чухлě, лашасем енěпе 12 пуç, качакасемпе сурăхсем енěпе 200 пуç чухлě ирттерсе тултармалла.

5. Курăксемпе тымар-çимěçсем акас плана, утă пухса кěртес тата силос хывас плана, кашни выльăх валли апат хатěрлес нормăсене ирттерсе тултармалла, выльăх апачěпе тěрěс, перекетлěн усă курассине йěркелесе ямалла тата выльăхсене кěтÿ кěтсе çÿрессине кăтартуллăн организацилемелле.

6. Мěнпур выльăх-чěрлěхсем валли çурт-йěрсем туса çитерсе, вěсене хěле хатěрлемелле.

Эпир мěнпур колхоз председателěсене, ферма заведующийěсене, дояркăсене, телятницăсене, скотницăсене, свинаркăсене, чабансене, конюхсене, кайăк-кěшěк ěрчетекенсене, кролиководсене, хурт-хăмăр ăстаçисене, зоотехниксене, ветеринари врачěсене, çěрěç органěсен мěнпур работникěсене выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе пыракан Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма тата выльăх-чěрлěх ěрчетмелли государство планне мěнле пулсан та пурнăçа кěртмелле тата ирттерсе тултармалла тума чěнетпěр.

Эпир Оборонăн Государственный Комитечěн выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе пыракан Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнă облаçсем, крайсем тата республикăсем валли Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне тума ыйтатпăр.

Фронт валли лайăхрах ěçлес тесе халě совет çыннисем пурте—металлургсем те, шахтерсем те, пир тěртекенсем те, танк тăвакансем те ăмăртаççě. Хěрлě Çар валли тата хамăрăн тăван Совет çěршывě валли мěнле те пулин лайăхрах та нумайрах ěçлес тесе тăрăшман пěр завод та, пěр кěтес те çук.

Колхозла выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри работниксем! Фермăсем, колхозсем, районсем, облаçсем, крайсем тата республикăсем хушшинче пыракан Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнăр! Хамăрăн паттăр боецсене, пирěн телейшěн, пирěн пурнăçшăн нимěç захватчикěсене хирěç кěрешекен боецсене лайăх çитерсе усрар, лайăх тумлантарса тăхăнтарар!

Чабансем, дояркăсем, телятницăсем, свинаркăсем, конюхсем, колхозла выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри мěнпур работниксем! Социализмлă ăмăрту ялавне çÿле çěклěр! Пирěн хаклă Сталин юлташ ертсе пынипе— малалла, çěнтерÿ патне!

**Сталин ячěпе тăракан колхозри 650 колхозникпе колхозница пулнă пěрлешÿллě пухура пěр саслăн йышăннă; пуху хушнипе çаксем алă пуснă:**

**Ф. Сероштан** — СССР Верховный Совечěн депутачě, колхоз председателě, **А. Сарсенов** — аслă чабан, **А. Пономарева, У. Сероштан, Е. Подвигина, В. Машкина** — дояркăсем, **С. Мащенко**—свинарка, **С. Ержанов** — колхозăн зоотехникě, **А. Токтобаева** — свинарка, **А. Бондаренко** — вăкăрпа ěçлекен, **Г. Макогон** — уйхир бригадин бригадирě, **А. Досымов** — вăкăрпа ěçлекен, **М. Окружко** — сěт-çу фермин заведующийě, **Т. Дутова** — ферма учетчици, **Н. Сексембаев** — сурăх фермин чабанě, **Ф. Харченко** — сурăх фермин заведующийě, **А. Дутов** — колхозник, **Ф. Казаков** — колхозри комсомол организацин секретарě, **Ш. Айсеканов** — кěтÿçě, **В. Чуприн** — колхоз председателěн заместителě, **П. Бондаренко** — утар заведующийě, **А. Турченко** — ялсовет председателě, **Р. Петрова** — колхозри партор ганизацин секретарě.

## Хěрлě обозсем организациленě

КАЛИНИНО, июнěн 1-мěш. (Телефонпа). Вăрнар аслă çулě тăрăх паян ирех нумай йышлă обозсем иртме тытăнчěç. Вěсем çине тěш-тырă, аш-какай, сěт-çу, çăмарта, тимěр-тăмăр тиенě. Малти лав çинче «Пěтěмпех фронт валли, пěтěмěшпех çěнтерÿ тума!» тенě лозунг ялкăшса пырать.

Районри колхозсем иртнě çулхи тыра 1942 çулшăн государствăна пама каяççě. «Коминтерн», «Комбайн», Мичурин ячěпе тăракан колхозсем хěрлě обоçсем организациленě. Мичурин ячěпе тăракан колхоз паян государствăна 40 лав тěштырă пачě. Пушкин ячěпе тăракан колхоз, 30 лавлă обоз организацилесе, государствăна 1942 çулшăн 100 центнер тырă, Калинин ячěпе тăракан колхоз 20 лав тěштырă, 2 лав аш-какай, 4 лав тимěр-тăмăр, «Партизан» колхоз 65 центнер тырă, 3000 çăмарта, 50 килограмм çăм, 800 килограмм тимěр-тăмăр пама туха кайрěç.

Районри колхозсем паян государствăна 600 центнер тěштырă, 10 пин çăмарта, 20 центнер аш-какай, 300 центнер тимěр-тăмăр, 60 килограмм çăм пачěç.

**Е. ВОРОБЬЕВ.**

Çěмěрлери Заготзерно пунктне таврари районсенчен тырă тиенě лавсем пыма пуçларěç. Ěнерпе паян пункта татти-сыпписěрех лавсем пыраççě. Хěрлě Чутай районěнчи «Свет» колхоз çак кунсенче государствăна 1942 çулти обязательство шучěпе пěр тонна ытла, «Агроном» колхоз пěр тонна та 937 килограмм, «Жнейка» колхоз 722 килограмм ыраш леçсе пачěç. Калинински районри Каганович ячěпе тăракан колхоз та 532 килограмм ыраш леçсе пачě.

**Х. ЛИСИН.**

Июнěн 1-мěш. (Хамăр корр).

## Харьков енчи çапăçусем çинчен

**Советăн Главнăй Командованийě кăшт маларах Ростов фрончěн участокěсенчен пěринче нимěçсен фашистла войскисем пысăк наступлени пуçласа ярас тěлěшпе нимěçсен командованийě тунă плансем çинчен пěлнě. Фронтăн çав участокне нимěçсен командованийě 30-тан кая мар пехотнăй дивизи, 6 танковăй дивизи тата артиллерипе самолетсем нумай илсе пырса тултарнă.**

**Нимěçсен фашистла войскисем пире пырса çапма ан пултарччăр тесе, нимěçсен фашистла войскисен çав наступленийě арканса кайтăр тесе, совет командованийě Харьков енче наступлени пуçласа ячě, анчах çак операцире Харьков хулине йышăнса илесси командованин планне кěмен.**

**Фронтăн çак участокěнче икě эрне хушши хаяр çапăçусем пулса пычěç. Халě ěнтě, çапăçусем вěçленес патне çитнě хыççăн, çапла калама пулать: нимěçсен фашистла войскисем пире пырса çапма ан пултарччăр тата нимěçсен фашистла войскисен наступленийě арканса кайтăр тесе Совет командованийě лартнă тěп задачăна пурнăçа кěртнě. Çав çапăçусенче нимěçсен фашистла войскисен салтакěсемпе офицерěсем 90.000 çынран кая мар вилнě е тыткăна лекнě, тăшманăн 540 танк, 1511 оруди, 200 çити самолет пěтнě.**

**Пирěн войскăсен çав çапăçусенче 5.000 çынна çити вилнě, 70.000 çын нимěн хыпарсăр çухалнă, 300 танк, 832 оруди тата 124 самолет пěтнě.**

**Нимěç çарěн командованийě Харьков патěнчи çапăçусене хăйсен пысăк çěнтерěвě пек кăтартса темěн чухлех çырса тултарнă тата совет салтакěсене тыткăна илнě тесе, советăн техникине питě те нумай пěтерсе тăкнă тесе, фантастикăллă цифрăсем илсе кăтартать. Нимěçсен командованийěн çавнашкал элекěсене хирěç эпир çакна çеç калама пултаратпăр: нимěçсен çакнашкал «çěнтерÿсем» тата темиçе пулсанах нимěçсен фашистла çарě пěтěмпех хавшаса çитет.**

**СОВИНФОРМБЮРО.**

## Партизансене парне

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем партизансем валли парне пухма тытăнчěç. Канашри пункт урлă партизансем патне пурě 2.805 япала янă. Вăл шутра 30 мăшăр атă-пушмак, 88 михě, 100 мăшăр тăла, 66 мăшăр кěпейěм, 115 мăшăр чăлха, 684 енчěк, 354 катăк супăнь, 109 килограмм табак, 66 котелок, 77 çěçě, 198 туплашка çип пулнă.

Канаш районěнчи комсомолецсемпе çамрăксем партизансем валли 2 мăшăр атă, 40 котелок, 26 çěçě, 16 пачка табак пухнă.

Сěнтěрвăрри районěнчи çамрăксем партизансем валли япаласем илме 4.700 тенкě укçа пухнă. Укçа пухас ěç халě те хěрÿллě пырать.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Майăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 31-мĕшĕнче фронтра палăрнă улшăнусемех пулман.

Тĕплĕнрех палăртнă даннăйсем тăрăх, майăн 29-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 94 самолет мар, 143 самолет пĕтерсе тăкнă.

Хура тинĕс çинче пирĕн карапсемпе авиаци противникăн 8.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă тата Финн заливĕнче противникăн тральщиккĕпе транспортне путарнă.

* * *

Майăн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 11 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 45 лавне, горючи тултарнă 12 автоцистернине, радиостанцине, 16 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 11 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугун çул çинче 32 вагона тата пĕр паровоза çĕмĕрнĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 8 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен автоматчикĕсен батальонĕ пирĕн Педа тата Баранов юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисенчен айккинчен пырса иртсе кайма хăтланнă. Пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăшмана пысăк сиен кÿнĕ те контратакăна кайнă. Алă вĕççĕн тăрса çапăççан, противника пысăк çухатусем тÿстерсе каялла сирсе янă. Оборонăн малти лини хĕрринче çеç те пирĕн боецсем тăшманăн 160 виллине шутласа кăларнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен артиллеристсем нимĕçсен 6 танкне, темиçе миномечĕпе пулеметне тата 150 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лейтенант Дежков командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсен ушкăнĕ нимĕçсен оборонин икĕ опорнăй пунктне пĕрлештерсе тăракан çул çине минăсем хурса тухнă. Тепĕр кунне çав минăсем çине пырса нимĕçсен çулпа пыракан танкĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен «Фашизма вилĕм» ятлă отрячĕ, С. юлташ командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен пĕр танкне, 5 автомашинине, трактор-тягачне пĕтерсе тăкнă тата 31 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Иозеф С. çапла каласа панă: «1940 çулăн вĕçĕнче эпĕ мана пин полякпа пĕрле Германие ирĕксĕр ĕçе, Дудерштатри фабрикăна тума илсе кайрĕç. Эпир унта пралукпа карса çавăрнă лагерьте пурăнтăмăр. Пире çимĕç юлашкийĕсемпе тата çĕрнĕ япаласемпе тăрантаратчĕç. Виçĕ уйăх хушшинче çав лагерьте выçăпа тата чирлесе 90 çынна яхăн вилнĕ. Пăртак вăхăт иртсен мана Германи çарне илчĕç. Манăн хамăн çĕршыва чуралантарнă нимĕçсемшĕн вăрçма пĕрех те кăмал пулман. Нумаях пулмасть, блиндажсем тăвакан салтаксем апат çиме кайсан, эпĕ вăрман тăрăх вырăссем еннелле утрăм. Çул çинче красноармееца тĕл пултăм та ăна хамăн карабина патăм тата совет листовкине кăтартрăм».

* * *

Нимĕçсен обер-офрейторĕ Гимпел çумĕнче унăн арăмĕ патне ярса ĕлкĕреймен çырăвне тупнă. Çав çырура вăл çапла çырнă: «...Ĕнер эпĕ хамăр полкри 24 юлташа пытарнă çĕрте пултăм. Вĕсенчен виççĕшĕ офицер пулнă. Эпир кунта килсен 6 салтака пытартăмăр, тата темиçе кун иртсен вилнĕ салтаксен хисепĕ çĕре те çитрĕ. Йышлăрах та йышлăрах юлташсем хамăр тăван çĕршыва нихăçан та таврăнас çукки çинчен шухăшласан йывăр тата хăрушă пулса тăрать...».

* * *

Нимĕçсен тыткăнри çынсем валли тунă лагерĕнчен, Луга хули çывăхĕнче лараканскертен, 5 красноармеец тарнă. Вĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене гитлеровецсем калама çук тискеррĕн мăшкăллани çинчен каласа панă. Нимĕçсем тыткăнри çынсене выçă усраççĕ. Тыткăнри çынсенчен нумайĕшĕ питĕ начарланса çитнĕ, утма та пултараймаççĕ. Пĕчĕк айăпа кĕнĕшĕнех фашистла çынçиенсем красноармеецсене çавтери асаплантараççĕ. Пĕрре хăма çухалнăшăн пĕтĕм лагере наказани панă. Тыткăнрисене шурлăх çине выртарнă та нумайччен тăма ирĕк паман. Красноармеецсенчен пĕрне нимĕç ирсĕрĕсем тăхаран янаххипе çакса хунă та темиçе кун хушши унтан вĕçертсе илмен.

## Июнĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçăн боецĕсем противника хирĕç çапăçса унăн 3 танкне, 2 орудине тата 5 минометне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен 300 салтакĕпе офицерне çити вилнĕ. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Серебряков юлташ командир пулса тăракан часть (Калинин фрончĕ) нимĕçсен пехотин атакине сирсе пăрахнă, çав пехота пирĕн оборонăллă пункта йышпăнса илме хăтланнă пулнă. Нимĕçсем çапăçу хирĕнче 200 виле ытла пăрахса хăварнă. Тăшманăн 2 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн боецсем 14 пулемет, винтовкăсем тата автоматлă тупă тытса илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен артиллерин Н-ски полкĕ 6 уйăх хушши çапăçса нимĕçсен 15 танкне, 59 орудине, минометсен 18 батарейине тата артиллерин 7 батарейине пĕтерсе тăкнă, 166 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, боеприпассен 5 складне вут тĕртсе çунтарнă тата пулеметсен 172 точкине пусарса лартнă. Артиллеристсем çав вăхăт хушшинче противникăн 3.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллери нимĕçсен 2 дзотне тата 5 блиндажне çĕмĕрнĕ, 2 орудине тата противникăн боеприпассем турттарса пыракан обозне пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллери нимĕçсен «Юнкерс-88» йышши бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 500-мĕш штрафной батальонĕн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Иоганн Виттерманн çапла каласа панă: «Пирĕн батальона çынсем темиçе хут та йышлăн хупа-хупа панă. Юлашки хут хупса париччен батальонра мĕнпурĕ те 3 рота çеç пулнă, кашни ротăра 40—50 çын çеç пулнă. Батальона çынсем концентрациллĕ лагерьсенчен ярса хупса параççĕ, çавăн пек лагерьсем Германире пит те нумай. Эпĕ пулнă лагерьте тытса хупнă салтаксемпе офицерсем 2.000 çын таран шутланатчĕç. Нумайĕшне вĕсене çартан тарнăшăн тата çапăçура хăравçăлăх кăтартнăшăн айăпласа суд тунă. Çак кунсенче батальон каллех пысăк çухатусем тÿсрĕ. Пĕрремĕш рота пĕр хăй çеç те çапăçу хирĕнче вилнĕ 50 салтакпа офицера ытла пăрахса хăварнă, çав шутра ротăн командирĕ Траус лейтенант та пур».

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизири 499-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак В. Ашауэр çапла каласа панă: «Фронта эпĕ Сербирен килтĕм. Унта партизансем пирĕн чаçсем çине питĕ хăюллăн та хаяррăн тапăнатчĕç. Эпир кунта тухса килес умĕн пирĕн лагерьтен инçех мар партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕç полицейскийĕсен отрячĕ çине тапăннă. Сербсем çав полицейскисене сыхласа тăнă та вĕсене çавăрса илнĕ, нумайĕшне вара вĕлерсе пĕтернĕ. Вĕсем патне пĕр рота салтак ярсанах партизансем пĕр йĕр хăвармасăр тарса пытаннă.

* * *

Пирĕн чаçсем пыра-пыра çапнипе Черновое ялĕнчен каялла чакнă чухне гитлеровецсем нимĕçсен йывăр аманнă 65 салтакне, ялти больницăра выртнăскерсене персе пăрахнă. Медицина енчен тĕрĕслени тата курнă çынсем каласа çакна кăтартаççĕ: нимĕçсем хăйсен йывăр аманнă салтакĕсене унччен те вĕлерсе пынă. Нимĕçсен лазаретĕнче санитарка пулса ĕçленĕ И. Д. Нестеренко çапла каласа панă: «Аманнă салтаксем сасартăк çухалнине эпĕ час-часах асăрханă. Пĕрре, çапла, урине снаряд татса пăрахнă салтак шыв ыйтрĕ. Шухăш-кăмăлĕсем унăн самаяхчĕ. Эпĕ шыв илсе пырсан мана палатăна ямарĕç. Пĕр çур сехет иртсен эпĕ çав салтака, вилнĕскере, подвала илсе кайнине куртăм. Çавăн пек ĕçсем час-часах пулкаланă».

* * *

Поляксен партизанла отрячĕн, Казимир Соколинский ертсе пыраканскерĕн, çапăçăвĕсем çинчен çĕнĕ хыпарсем илнĕ. Поляксен патриочĕсем нумаях пулмасть танксем юсакан мастерской çине, Польшăри пĕр пысăк хула çывăхĕнче лараканскер çине, пырса тапăннă. Партизансем мастерскойăн хуралне вĕлерсе пĕтернĕ, мастерскойне çунтарса янă тата нимĕçсен юсакан 7 танкне пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсен хĕвелтухăçнелле боеприпассем турттарса каякан эшелонĕ çине вут тĕртекен пульăсемпе пенĕ. Взрыв пулнипе 8 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

## Татах 17 гектар

ШАХАСАН. Райцентрти «Красный Октябрь» колхоз çуракинчи ĕçсен планне ăнăçлăн тултарчĕ. Кун хыççăнах çураки планĕнчен ирттерсе, колхоз оборона фондне хывма 10 гектар тырă акса хăварчĕ. Çак иртнĕ кунсенче колхозниксем тырă акма юрăхлă çĕр лаптăкне татах та 17 гектар сарчĕç. Унта колхоз оборона фондне тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсемпе облаçсенчи колхозсене пулăшнă çĕре пама тырă акса хăварчĕ. Çапла оборона фондне хывма колхоз пурĕ 27 гектар тырă акрĕ.

**А. ОРЛОВ.**

# Пĕр МТС-ри комсомолецсем

Комсомолăн Тăвай МТС çумĕнчи пуçламĕш организацийĕнче пурĕ 27 комсомолец, вĕсенчен 19-шĕ хĕрсем, 15 çын тракторист пулса ĕçлеççĕ. Ытти комсомолецсем трактор бригадин бригадирĕ, бригадир помощникĕ е участокри механик пулса ĕçлеççĕ.

Ку МТС-ри комсомолецсемпе комсомолкăсем çураки пуçланиччченех социализмлă ăмăрту пуçарса янă. Çураки вăхăтĕнче комсомолец-трактористсем аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем хăйсен тракторĕсене лайăх пăхрĕç, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене перекетлерĕç. Çурхи ĕçсен малтанхи кунĕсенче комсомолка-трактористка Ксения Егорова СТЗ тракторпа нормăна 130—135 процент тултарса пычĕ. Комсомолка Нина Кузьмина кăçал кăна курсран вĕренсе тухса тракторпа ĕçлеме тытăннă. Çапла пулин те, вăл планпа кăтартнă 2,8 гектар вырăнне хăшпĕр кунсенче 5,5 гектар сухаланă. Кузьмина юлташ та 6,30 гектар таран сухаланă.

Ытти комсомолка-трактористкăсем те пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ. Ксения Яковлевăпа Анна Чернова трактористкăсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ, нормăна 130 процент тултараççĕ. Наталия Карсакова трактористка планпа кăтартнă 4,5 гектар вырăнне 8,25 гектар, тепĕр чухне 9,5 гектар таран сухалать. Анна Егорова трактористка пулса пĕрремĕш çул ĕçлет. Малтанхи кунсенчен пуçласах плана ытлашшипех тултарса пырать. Çав вăхăтрах вăл çунтармалли япаласене перекетлессишĕн те кĕрешет, 5 кун хушшинче 56 килограмм перекетленĕ.

Кăçал кăна вĕренсе тухнă трактористкăсем ĕçре вĕренсе, хăнăхса пыраççĕ. Елена Кабартовăпа Мария Батанова трактористкăсем малтанхи кунсенче нормăна тултарайман, çунтармалли япаласене те нумай расходланă. Халĕ вĕсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă тракторпа ĕçлеме хăнăхса çитрĕç, кашни кунах нормăна тултараççĕ.

МТС-ри комсомолецсем массăллă-политикăллă ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Комсомолец-агитаторсем малтан тракторсене юсакан рабочисемпе курсантăсем хушшинче ĕçлерĕç. Халĕ ку ĕçе трактор бригадисенче, сухалакансемпе акакансем хушшинче туса пыраççĕ. Вĕсем унта хаçатсем вулаççĕ, калаçусем туса ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. МТС-ри комсомолецсем бригадăсенче 27 номер стена хаçачĕ кăларнă.

**Л. МИХАЙЛОВ.**

**ВЛКСМ Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.**

## Трактористка-стахановкăсем

ШĂХАСАН, майăн 31-мĕш. (Телефонпа). Пирĕн МТС-ра пĕтĕмпе 15 трактористка ĕçлет. Вĕсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Трактористкăсем тăрăшса ĕçленине пула, эпир паянхи куна 800 гектар ытларах сухаласа çурхи ĕçсен планне 96 процент ытларах тултартăмăр. Кунпа пĕрлех трактористкăсем çунтармалли япаласене перекетлессишĕн тăрăшаççĕ. Халиччченхи вăхăтра çунтармалли япаласене 886 килограмм перекетлесе хăварнă.

15 трактористкăран 10 çын нормăна ирттерсе тултарса пыраççĕ. Ытти 5 трактористки ку таранччен нормăна тултарса пыраймарĕç-ха, анчах вĕсем те çитес вăхăтрах хăйсен ĕçне лайăхлатма тăрăшĕç.

Трактористкăсен социализмлă ăмăртăвне хутшăнса лайăх тĕслĕхсем кăтартнă стахановкăсем пирĕн сахал мар. Трактористка Евдокия Николаева (9-мĕш бригада) СТЗ тракторпа норма тăрăх 65 гектар сухалас вырăнне 91,3 гектар сухаланă. Çак ĕçре çунтармалли япаласене 186 килограмм перекетлесе хăварнă. 9-мĕш бригадăри трактористка-комсомолка Евдокия Александрова СТЗ тракторпа 65 гектар сухалас вырăнне 85,6 гектар сухаланă, çунтармалли япалана 13 килограмм перекетлесе хăварнă. 7-мĕш бригадăри комсомолка-трактористка Нина Иванова 73 гектар сухаласа 25 килограмм çунтармалли япала перекетленĕ, 10-мĕш бригадăри трактористка Варвара Васильева СТЗ тракторпа 69 гектар ытларах сухаласа çунтармалли япаласене 188 килограмм перекетлесе хăварнă. У—2 тракторпа ĕçлекенсем те хăйсен нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. 8-мĕш бригадăри Анна Семенова трактористка нормăпа 45 гектар сухалас вырăнне 59 гектар ытларах сухаланă, çунтармалли япаласене 50 килограмм перекетлесе хăварнă.

Трактористкăсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва малашне те вăйлатсах пыратпăр.

**О. ВИНОГРАДОВА.**

**МТС Политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.**

## Кашни килограмм бензина шутра тытаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. МТС трактористчĕсем çуракине тухсанах, тухăçлăн ĕçлесе горючине типтерлĕн тыткаласси тивĕçлĕ вырăна хучĕç. Носов, Гаврилова трактористсем ĕç нормине 110—120 процент тултарса ĕçленĕ вăхăтрах горючине те чылай перекетлесе хăварчĕç. Тракторист Василий Николаев 13 смена хушшинче 48 гектар çурă сухаланă. Пĕр гектара сухалама унăн, норма тăрăх, 19 килограмм бензин çунтармалла пулнă, вăл 17,4 килограмм çунтарнă, çапла кашни гектартанах 1,6 килограмм перекетлесе хăварнă.

Çавăн пекех трактористка Таисия Арсентьева юлташ та горючине перекетлесе пырать. Çуракинче вăл 46 гектар сухаланă, кашни гектар пуçне 18,27 килограмм бензин расходланă. Çапла вăл нормăпа расходламалла пăхнă бензина 33 килограмм çурă ытла перекетлесе хăварнă. Çуракинчи ĕç планне ирттерсе пурнăçланăшăн тата горючине перекетленĕшĕн Т. Арсентьева юлташа 35 ĕç кунĕ хушса тÿленĕ.

**Р. ВАСИЛЬЕВА.**

*Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту*

## Ăмăрту сарăлсах пырать

КАНАШ. Çĕршыври малта пыракан предприятисен чĕнĕвĕ çине ответлесе, вагонсем юсакан заводри цехсем, сменăсем, бригадăсем тата уйрăм рабочисем те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Фронтпа чугун çул транспортне продукцисем ытларах парассишĕн ăмăртса ĕçлесе, заводри стахановецсем кунран кун çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Губский юлташ начальник пулса тăракан цехри Матузенко шишельница майăн 23-мĕшĕнче сменăри нормăна 300 процент ытла, Подвиженкăпа Котляренко формовщиксем 400 процента яхăн тултарнă. Утильцехри Павлюкпа Петрова строгальщиксен, Пекшинпа Емелин тимĕрçĕсен, Токарев юлташ ертсе пыракан цехри Агеев, Никитин, Некрасов тата Савченко токарьсен ĕç тухăçлăхĕ те çавăнтан кая мар. Тимĕрçĕ цехĕнчи опытлă рабочисем Пойнерпа Садович юлташсем хăйсен нормисене кашни сменăрах 300—350-шер процент тултараççĕ. Социализмлă ăмăртура çакăн пек пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартакан рабочисем ытти цехсенче те нумай.

Юлашки вăхăтра чылай цехсен коллективĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлама пуçларĕç. Коломиец юлташ начальник пулса тăракан цех коллективĕ, сăмахран, вагонсем юсамалли плана срокченех тултарнă. Ку цехри столярсемпе слесарьсен бригадисем (вĕсене Дмитриев юлташсем ертсе пыраççĕ) хăйсен обязательствисенче кăтартнă срокран эрне малтан пурнăçланă. Чернухинпа Капелюх юлташсен бригадисем, ĕçе хăвăртлатмалли майсемпе усă курса, кашни кун пĕрер вагон юсаса кăлараççĕ. Марченко юлташăн бригади те сменăри заданисене тăтăшах 300 процент тултарать.

Токаревпа Соколовский юлташсем ертсе пыракан цех коллективĕсем ĕç графикне тĕрĕс пурнăçласа пырса ĕçлеççĕ. Çавăнпа вĕсем сменăри заданисене кашни кун ирттерсе тултараççĕ, лайăх пахалăхлă продукцисем параççĕ. Кунти рабочисем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăннă.

Заводра ăмăрту сарăлнăçемĕн сарăлса пырать.

**Т. ИВАНОВ.**

## *Нормăсене ирттерсе тултараççĕ*

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комбинат коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, май уйăхĕнчи ĕç планне 105 процент тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 3 процентран кая мар чакарма пулнăччĕ. Коллектив халĕ çав обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать. Станюлий юлташ пачальник пулса тăракан цехри бригадăсем пурте хăйсен заданийĕсене ирттерсе тултараççĕ. Гржибовский юлташ ертсе пынипе ĕçлекен слесарьсем юлашки вăхăтра ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Вĕсем май уйăхĕнчи ĕç планне тултарни темиçе кун ĕнтĕ. Çавăн пекех Терехова юлташăн бригади те уйăхри задание 20 кун хушшинчех пурнăçланă. Терехова юлташ хăй кулленхи нормăна вăтамран 200 процент тултарса ĕçлет.

Мастер Иванов юлташ ертсе пынипе ĕçлекен рабочисем ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Стахановецсем Бутузовпа Латышева юлташсем сменăри нормăсене 230 процент тултараççĕ. Ейковпа Берестеев рабочисем те икĕ çын чухлĕ ĕçлеççĕ.

Типĕтекен цех коллективĕ май уйăхĕнчи плана тултарчĕ. Кунти Утехина юлташ ертсе пыракан хĕрарăмсен бригади уйăхри плана 20 кун хушшинчех 253 процент тултарнă. Ку бригада хăйĕн заданийĕсене халĕ те 220 процент тултарса пырать.

**Х. ЛИСИН.**

# АНГЛИН ПИН ЫТЛА САМОЛЕЧĔ ГЕРМАНИ ÇИНЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пин ытла бомбардировщик Рур тата Рейн облаçĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировкăн тĕп объекчĕ Кельн пулнă. Самолетсен командирĕсем малтан каласа пĕлтернĕ тăрăх, атакăсем калама çук ăнăçлă пулнă. Майăн 31-мĕшĕнче ирхине ирех разведка çапла пĕлтернĕ: бомбардировка тунă объектсем çинче 15 пин фут çÿллĕше çити шĕр тĕтĕм тĕтĕм тăрать, тенĕ.

Бомбардировщиксен çыраври тата войсковой авиацин истребителĕсен уйрăх соединенийĕсем çав каçхинех противникăн аэродромĕсене атакăланă тата Англин самолечĕсене пÿлме тăрăшнă истребительсене хирĕç çапăçнă.

Çак операцисенчен Англин 44 самолечĕ таврăнман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи çине майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вĕçсе пырса тапăнни Англи авиацийĕ ку таранччен ирттернĕ операцисенчен чи пысăкки пулнă.

Германи авиацийĕ Англи çине йышлăн вĕçсе пырса тапăннă чухне те вĕсен 500 машинăран ытла пулман, тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Швецин Мальме хулинче пурăнакансем Дания енчен илтĕнекен взрывсен шавĕпе вăраннă.

Копенгаген çине самолетсен 5 эшелонĕ вĕçсе пынă. Хулара сывлăшри тревога пуçламан çинчен пĕлтернĕ, тревога çур сехете пынă.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, халĕ çакă паллă ĕнтĕ: Кельн çине вĕçсе пырса тапăннă çĕре высши офицерсен представителĕсем хутшăннă, вĕсем бомбардировка тунин результачĕсемпе хăйсем паллашасшăн пулнă. Сывлăшра çĕнĕрен çĕнĕ самолетсем вĕçсе хăпарнă май, моторсем кĕрлени пĕрлешсе кайса питех те пысăк шав пулса кайнă. Юлашки бомбардировщиксем вĕçеврен тул çутăлса килнĕ чух çеç таврăннă.

Кельнри çар объекчĕсем çине 90 минута хушшинче 10.000 бомба пăрахнă, тесе пĕлтерет Лондонри радио.

Кельнри зенитнăй артиллери вăйлисенчен пĕри шутланать пулин те, вăл Англи бомбардировщикĕсен çапăçу ĕçĕсене чăрмантарма пултараймен. Англин чылай пилочĕсем, Кельн çине вĕçсе пырса тапăннă çĕрте пулнăскерсем, унта тухнă пушарсем Любекпе Ростокри пушарсенчен те вăйлăрах тата йышлăрах пулнă, тесе калаçа параççĕ.

## Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕн командующийĕ патне Черчилль янă послани

ЛОНДОН, майăн 31-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрĕ Черчилль Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕн командующийĕ патне çакăн пек послани янă: «Эпĕ сире тата бомбардировка тăвакан авиацин пĕтĕм личнăй составне çавтери организациллĕ çитĕнÿ тунипе сывлăх сунатăп, вăл çитĕнÿ пире пĕр Кельн районне кăна пĕр каç хушшинчех бомбардировщиксем пин ытла яма тата вĕсен ĕçĕсене пĕр кăлтăксăрах, çур сехет пек кĕске вăхăтрах тĕллев çийĕнче пĕтĕçтерме май пачĕ. Çакă вăл Англин бомбардировка тăвакан авиацин вăй-хăвачĕ ÿснине, çавăн пекех тата Германи хулисене малашне мĕн кĕтнине кăтартса парать».

## *Гитлеровецсем халăхран тумтирсем туртса илеççĕ*

СТОКГОЛЬМ, майăн 30-мĕш. (ТАСС). Июнĕн 1-мĕшĕнче мĕнпур Германире халăхран тумтирсем туртса илмелли кампани пуçланать. Çак кампание ирттермелле тунă сăлтавсем çинчен тата халăх умĕнче тăракан çĕнĕ çарату мĕн анлĕш пуласси çинчен халăха чĕнсе калани ăна гитлерла «Берлинер берзенцейтунг» хаçатра пичетленĕ) пуринчен те лайăх çирĕплетсе парать.

«Çар завочĕсенче тата ялхуçалăхĕнче ĕçлекен нимĕçсене, — тесе çырать хаçат, — тумтирсем тупса памалла. Пĕлтĕр çавăн пек пуçару пулса иртнĕччĕ, анчах кĕпе-йĕм сахал пуханнăччĕ. Çавăнпа та кăçал арçынсемпе хĕрарăмсен кĕпе-йĕмĕсене, çавăн пекех гардинăсене, коверсене, михĕсене, туфлисене, вĕрен татăкĕсене, кивĕ кĕпе-йĕмсене, чăлхасене, галстуксене, ялавсене тата мĕнпур çĕтĕк-çатăксене, вĕсене çурса тата кĕве çисе, çуллантарса тата лапăртанса пĕтернĕ пулин те, памалла пулать. Чылай нимĕçсене чи йывăр нушасем валли усракан юлашки костюмĕсене, вĕсем ытларах илемлĕ мар пулин те, парса яма килĕшме йывăр пулать. Кашнинех çак костюм йывăр минутăсенче кирлĕ пулать тесе шутлать. Костюмна камăн çавăн пек тумтир те çук—çавна пар та сапласа пĕтернĕ çанăсемпе тата çуталакан пуличчен якалнă шалаварсемпе çÿре. Унсăрăн ĕç вырăнĕсем пушă тăрса юлаççĕ, мĕншĕн тесен çав вырăна йышăнма пултаракансен тăхăнмалли нимĕн те çук. Ку сахал-ха. Килте нимĕн те юлмалла мар. Кирек мĕнле вак-тĕвек те, çĕтĕк-çатăк та, çип татăкĕсем те хаклă».

Хаçат малалла нимĕç халăхне «асăрхаттарасса кĕтмелле мар», тесе тата тумтирсене туртса илмелли кампание гитлерла организацисем «полици пăхса тăнипе» ирттереççĕ, тесе асăрхаттарать.

## Германи самолечĕсем Швеци территорийĕ çинче вĕçни

СТОКГОЛЬМ, майăн 31-мĕш. (ТАСС). Стокгольмра официальнăй йĕркепе çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: майăн 29-мĕшĕнче Германин виçĕ самолечĕ Швеци территорийĕ çийĕнчен вĕçсе каçса кайнă. Пĕр самолечĕ Сканийĕн кăнтăр пайĕн çийĕпе вĕçсе кайнă. Зенитнăй артиллери темиçе хутчен асăрхаттарса пенĕ. Иккĕмĕш самолечĕн тем инкек пирки ирĕксĕр анса ларма тивнĕ. Унăн экипажне çар влаçĕсен аллине панă. Виççĕмĕш самолечĕ нимĕçсен курьерски самолечĕ пулнă. Вăл зенитнăй артиллери асăрхаттарса пенĕ хыççăн куçран çухалнă.

## Итали войскисем Франци чиккинче пухăнса пыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 31-мĕш. (ТАСС). «Социал-демократен» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: маневрсем тунă пек пулса, итальянецсем Çурçĕр Италире Франци чиккине çывăх пысăк йышлă войскăсем хупăрласа тăратнă. Берлинра çакăн пирки нимĕнле ăнлантарса пама та килĕшмеççĕ.

## Япони парламенчĕн сессине уçни

ТОКИО, майăн 28-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японн парламенчĕн 80-мĕш чрезвычайнăй сессийĕ уçăлнă. Сессие уçнă чухне Японн императорĕ пулнă. Çÿлти палатăн заседанийĕнче премьер-министр Тодзио тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того тухса каланă; Того тĕнчери лару-тăрупа Японн политики çинчен доклад туса панă. Тодзиопа Того аялти палатăра та тухса каланă. Вĕсемсĕр пуçне аялти палатăра тата финанс министрĕ Кайя финанс тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле пыни çинчен отчет туса панă.

Унтан Тодзио хăй çар министерĕ пулса тăнă май тата тинĕс çар министрĕ Симада Японн парламенчĕн юлашки сессийĕ пулса иртнĕренпе вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен отчет туса панă.

## Виçĕ подводнăй лодкăна путарнă

Пĕр подводнăй лодка Бразилин «Лира» ятлă грузовой пароходне путарнăччĕ. Америкăн çар карапĕ çав подводнăй лодкăна атакăланă. Подводнăй лодкăна путарнă пулĕ, тесе шутлаççĕ. Юлашки 9 кун хушшинче Бразили шывĕсенче кунпала 3 подводнăй лодкăна путарнă ĕнтĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

**ЧЕБОКСАРСКАЯ ЦЕНТРАЛЬНАЯ СБЕРКАССА № 60**

просит всех бухгалтеров предприятий и учреждений получить до 5 июня облигации займа 3-й пятилетки (выпуск четвертого года) и выдать их подписчикам. В исключительных случаях, при невозможности вручения облигации, сдать их при именном списке в Сберкассу к 10 июня 1942 г.

Центральная Сберкасса № 60.

**ПРОПАЛА КОРОВА.**

Приметы: рыжая с белыми пятнами на голове, живот белый, один рог короче другого.

Знающих просим сообщить по адресу: ул. Энгельса, детский переулок, Детсад № 11. Тел. №7—75.

**КАЗАНСКИЙ ЮРИДИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ НАРКОМЮСТА СССР**

об'являет набор студентов на 1-й курс 1942—43 учебн. года.

Институт готовит юристов для работы в органах суда, прокуратуры и адвокатуры. Срок обучения 3 года. В Институт принимаются граждане, имеющие законченное среднее образование.

Окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 г.г. принимаются без испытаний. Все остальные подвергаются приемным испытаниям по русскому языку и литературе (устно и письменно), истории народов СССР и географии.

Поступающие в Институт подают заявление и прилагают автобиографию, аттестат об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), три фотокарточки.

В Институт могут быть зачислены на II и III курс студенты юридических Институтов, по тем или иным причинам прекратившие занятия.

Адрес Института: гор. Казань, ул. Чернышевского, дом № 27, тел. № 21—78.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 157 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: